ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ

# ХУПАР-И АЛĂКА? ĔМĔРЛĔХЕХ... ШАРТ ХЫТĂ





**Римма ПРОКОПЬЕВА,**

культурăпа чăваш диаспорин пайĕн корреспонденчĕ

*Ача тĕнчене чышкă чăмăртаса килет: çак çутă тĕнче пĕтĕмпех манăн, çавăнпа та вăл манăн алăра пулĕ. Этем çут тĕнчерен ал тупанне сарса каять: ак, хампа пĕрле эп нимĕн те илсе каймастăп.*

**МЕИР.**

МЕИР /Мейерсон/ Голда XX ĕмĕрти паллă политик, хĕрарăм. Вăл Израиль премьер-министрĕ, Мапаи çĕршывĕн тĕп секретарĕ пулнă. Ахальтен каламан Меир Голда çӳлерех илсе кăтартнă сăмахсене: пурнăç вăрттăнлăхне ăнланса илнĕ хĕрарăм хăйĕн черчен аллинче "пĕтĕм тĕнчене" тытса курнă, çав хушăрах хăйпе пĕрле нимĕн те илсе каяс çуккине пĕлсе-туйса тăнă. Çапла, никам та нимĕн те илсе каяс çук çак тĕнчерен. Ку тĕлĕшпе эпир пурте пĕр тан. Уйрăмлăхĕ – кам мĕн хăварнинче: пĕри – мул, тепри – ырă ят, виççĕмĕшĕ нимĕнпе танлаштарайми ахах-мерченлĕ Чăн сăмах пиллесе хăварать те хăйĕн ытарайми сăввисемпе этем чунĕ вилĕмсĕррине ĕнентерет.

Çуралнă эп чышка чăмăртаса –
"Çак çут çанталăк – манăн" тенĕ пек.
Вилсессĕн выртăп пӳрнене сарса, –
Пĕр ывăç пурлăха та илмĕп тек.
Е тата:
Кулать иккен пиртен çак çут çанталăк,
Хĕвелĕ, уйăхĕ – йăлтах кулать:
Тепле пĕрре яр уçăлать те алăк,
Ĕмĕрлĕхех шарт хупăнса юлать.

Пĕлекенни пĕлет: ку – Хусанкайăн "Тилли юррисем" ярăмĕнчен илнĕ йĕркесем. Чăвашра нумай вĕсем, Хусанкай кĕнекисене аларан ямасăр унăн ялтăр çутă поэзийĕнче чӳхенсе тасалакансем. "Йывăр вăхăтра пулăшать", – тенине те пĕрре мар илтнĕ. Анчах та май пур таран усă куратпăр-и эпир Хусанкай пире пиллесе хăварнă чĕрĕ мулпа?

Аслă поэтăмăрăн К.В.Иванов ячĕллĕ театрта ирттернĕ 100 çулхи юбилейĕ аса килет. Халăх лăк тулли: юратать, чăннипех юратать ăна чăваш çынни. Анчах та уяв мана ытла та официаллă, ытла та типпĕн иртнĕн туйăнчĕ. Поэт пултарулăхне кăвак хуппи пек яр уççăн кăтартма май пурччĕ пулин те! Тĕслĕххрен, кирлехчĕ-ши пин хут илтнĕ "Ĕмĕр сакки сарлака" юрра тепĕр хут янраттарма? Тавлашмастăп – хитре япала, анчах та Хусанкай каçĕнче унăн сăввисем тăрăх кĕвĕленĕ юрăсем ытларах пулсан аванрах марччĕ-ши? Çук мар-çке вĕсем! Николай Казаковăн Людмила Семенова шăрантаракан юррисем мĕнле çепĕç те черчен... Саша Егоров студент чухнех кĕвĕленĕ "Элчелĕм çитрĕ..." юрă-сăвă тĕлĕнмелле хăйне евĕрлĕ, чăн чăвашла пулса тухнă. Пытармастăп: çак юрра итле-итле хам валли çĕнĕ Хусанкая уçрăм, шкул е университет программинчине мар – хамăн чунри Хусанкая, чăн-чăн поэта!

Тав, Хусанкай каçĕнче унăн чĕрĕ сасси янăрарĕ, поэт чăваш халăх юррисенче еплерех "ирĕлнине" итлесе киленме май пулчĕ. Кашни сăмах тутине туйса, кĕвĕсим пылне тупса-тутанса юрлать вăл. Ытармалла мар! СССР халăх артистки Вера Кузьмина сцена çине тухса мăшăрĕн сăввисене калани те чăн-чăн тивлет.

Çапах та туллин усă курма пĕлместпĕр эпир хамăрăн иксĕлми пуянлăхпа. Петĕр Хусанкай юбилейĕ тĕлне Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ чăваш çамрăкĕсен театрĕ аслă поэт куçарнă "Ромеопа Джульеттăна" чăвашла лартса панă пулсан мĕнле аванччĕ! Халь вĕсене пырса тĕкĕнме те аптрамалла, вырăсла спектакльсем лартас енĕпе маçтăрлансах кайрĕç мар-и? Шухăшлатăп та, кирлех пулсан "Аптраман тавраш" сăвăлла романа та инсценировкăласа сцена çине кăларма май пур-çке! Мĕн чăрмантарать? Е чăваш сăмахне мала хуракана сума сумаççĕ-и? Тепĕр тесен, хамăрах шарт хупса лартмастпăр-и эпир пирĕншĕнех яр уçăлнă алăка?

Ах! та ах! тесе Ахахпиех тухса кайрăм ĕнтĕ. "Ах, çав Николай Казаковăн Петĕр Хусанкайăн сăвви тăрăх кĕвĕленĕ "Çывăр, Аптраман тавраш" сăпка юррийĕ! Мĕнле хитреччĕ", – тесе ахлатмалли çеç юлчĕ... Аслă ачамсем вăл юрра телевизорпа эрнесерен темиçешер хут итлесе савăнатчĕç – кĕçĕнни вара пĕрре те илтмен, пĕрре те курман. Мĕншĕн тесен Чăваш телевиденийĕ хăй вăхăтĕнче ачасем валли ятарласа хатĕрленĕ "Çывăр, Аптраман тавраша" тахçанах кăтартма пăрахнă, куракантан каçару ыйтмасăрах, мĕншĕнне ăнлантарса памасăрах... Чăваш тĕнчи пирĕн пуласлăхшăн, ачамăрсемшĕн, яр уçăлса пире пурне те куççăр тăратса хăварасран шикленетпĕр-ши? Е пире, чăвашсене, тăван сăмахсăрах, хамăрăн сăвă-юрăсăрах, юмах-халапсăрах яр çутă та таса, лăпкă та хăтлă тетпĕр-ши?